



# Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

✓ ПĔРЛЕ ШУХĂШЛАР-ХА...

Владимир АЛМАНТАЙ

## Камсем эпир? Хăш йăхран?



Владимир Алмантай.

**Шел пулин те, хамăр халăх историне çуррине те пĕлсех каймастпăр пулас эпир. Мĕншĕн тесен шкулсенче халиччен, тĕпрен илсен, вырăс е ют çĕршывсен историне кăна вĕрентнĕ пире. Сăвар е пăлхар ячĕсене вĕренӳ программисенче халăхсен хутшăнăвĕ е Атăлăн вăтам тăрăхĕнче çĕнĕ çĕрсемшĕн пынă вăрçăсем çинчен сăмах тапратнă май çеç асăнкаланă.**

Истори документчĕсенче хальхи чăвашсен йăх-несĕлĕсем тĕрлĕ этнонимпа çырăнса юлнă: 9–10 ĕмĕрсенче вĕсем «сăвар», «пăлхар» ятпа паллă, 11 ĕмĕртен малалла «Атăлçи пăлхарсем» тенĕ, 15 ĕмĕр вĕçĕнчи – 18 ĕмĕр пуçламăшĕнчи вырăспа ют çĕршыв хучĕсенче вара вĕсене «туçи черемиссем», «ту çыннисем», «черемис тутарĕсем» тесе асăнни пур. «Чăваш» сăмаха чи малтан 1508 çулхи ĕç-пулăмсемпе çыхăнтарса асăннă /А.И. Лызлов – «Скифсен историйĕ»/. «Чюваш» этнонимпа вара, халăх ячĕ пек, пуçласа бесермянсене /пăсăрмансене/ палăртнă. Чĕлхе тĕпчевĕсем тăрăх, бесермянсен шутне удмуртсене те, тутарсене те кĕртме пулать. Вĕсен ытларах пайĕ удмурт чĕлхиллĕ, сăнпа ӳт-пӳрен вара тутар майлă курăнаççĕ. Хăйсене вĕсем тĕне кĕнĕ тутарсем теççĕ.

1992 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче «Вечерняя Казань» хаçат Раççей информаци агенствин /РИА/ хыпарне пичетленĕ. Унта Удмурт республикин Министрсен Канашĕ республикăн çурçĕр тăрăхĕнче пурăнакан халăх йышне хăйĕн историлле ятне – «бесермян» ята тавăрса пани çинчен пĕлтернĕ.

Вырăс летопиçĕсенче пĕрремĕш хут «чăваш» термин Хусан ханлăхĕпе вырăссем хушшинче1524 çулта пулса иртнĕ тытăçупа çыхăнса тĕл пулать. Аслă кнеç Василий Иоаннович Сăр шывĕн юппинче Василь хула /хальхи Васильсурск/ туса лартнă хыççăн Хусана илме çар ярать, Сĕве шывĕ çинче çапăçу пулса иртет. Летопиç çырнă тăрăх, çав çапăçура «многих князей и мурз, и татар, и чювашу избиша».

1912 çулта Н.В. Никольский профессор 16–17 ĕмĕрсенчи Вăтам Атăл тăрăхĕн этнографи картине тунă чухне çакна палăртса хăварнă: 1521 çулта хальхи чăвашсен кăкĕсен çĕрĕсем Сăрпа Атăлăн сылтăм енче пулнă, Васильсурск таврашĕнче, вăл вăхăтра, тĕпрен илсен, черемиссем /çармăссем/ пурăннă. Сĕве вăррин /кăкĕн/ таврашĕнче – тутарсемпе черемиссем.

Вырăс историкĕ Н.М. Карамзин мĕншĕн Сафа-Гирейпе пĕр пулма килĕшнĕ черемиссемпе пĕрле чăвашсене те асăнать /«чювашу избиша»/ – кăна вăл тени пулать. 18-мĕш ĕмĕрччченех паянхи чăвашсен кăкĕсене «туçи черемис» е «тутар черемис» тесе каланă.

Хусан университечĕн 19-мĕш ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчи професссорĕ Василий Сбоев, пирĕн халăх çинчен ятарлă кĕнеке кăларнăскер, Тухăç, Анăç историкĕсемпе географĕсемшĕн «чăваш» ятлă халăх та пулни çинчен чылай вăхăт паллă пулман тесе çирĕплетет: «16-мĕш çĕрçуллăхăн çурринче çеç сасартăк историне пырса кĕрет вăл» тесе çырать. Пĕтĕмлетсе асăннă «чюваш» термина нихăш уйрăм этнос çумне те çыпăçтарма çук. Историн вăл тапхăрĕнче «чюваш» термин уйрăм халăх ятне пĕлтермен, этноним пулман, вырăс патшалăхне хырçă /ясак/ тӳлесе тăракан, хăй тĕнĕпе /язычество/ пурăнакан пĕтĕм хура халăха каланă çапла. Вăл – пĕтĕмлетсе палăртни. Хусан ханствин тапхăрĕнче, 16–17 ĕмĕрсенче, Атăлăн сулахай енче – йăлăмра хырçă тӳлесе пурăнакан тутарсене те ясак чăвашсем тенĕ, урăхла каласан, «чăваш» тени этноним /халăх ячĕ/ мар, халăхăн сийне çеç пĕлтернĕ. Çакнах çирĕплетеççĕ Е.И. Чернышев, И.П. Ермолаев, Д.М. Исхаков тĕпчевçĕсен ĕçĕсем те. Кăна Хусан вулăсĕн 1602–1603 çулсенче çĕр пайĕсене, çурт-хуралтăсене шута илсе ирттернĕ çырав кĕнеки те /Писцовая книга/ лайăх палăртать. 16–17 ĕмĕрсенчи тутар ялĕсене ятарлăн тĕпченĕ Е.И. Чернышев çапларах пĕтĕмлетет: патшалăх ĕçĕнчи тутарсем хăйсене хырçă тӳлекен тутарсенчен уйăрарах тăнă, вĕсене «чюваш» тенĕ. Çырав кĕнекиех çакна кăтартать: «хырçă чювашинĕ» патшалăх ĕçне тивĕççенех ăна тутарсен шутне кĕртнĕ. Пĕр тĕслĕх. Çырав кĕнекинче Мансур «чювашенина» асăннă. Пĕр ывăлĕ унăн хырçă тӳлесе пурăннă, тепри «патшалăх ĕçĕнчи /служивый/ татарин» пулса тăнă. В.П. Иванов историк палăртнă тăрăх, чылай тĕпчевçĕ Хусан çумĕнчи тата Шурă Атăл леш енчи «хырçă чăвашĕсем» тенĕ халăха 17 ĕмĕр вĕçĕччен тутарлатнă пăлхарсемпе çыхăнтараççĕ. Ку çинчен «Чуваши: история и культура» кĕнекен 1-мĕш томĕнче тĕплĕнрех вуласа пĕлме пулать /Шупашкар, 2009. 66–69 стр./.

Çырав кĕнекинче Ногайск тăрăхĕнчи /сăмах май, асăннă кĕнекере вăл вăхăтра хальхи «район», «округ», ытти çавăн йышши вырăна пĕлтерекен ăнлава «дорога» сăмахпа палăртнă – «Ногайская дорога», «ГалицоАлатская дорога».../ Евлушеик ялĕн-

уçса памасть, анчах В.А. Сбоев шучĕпе ку – per anticipationem. Çутçанталăка пуç çапса, ĕненсе пурăнакансене /язычниксене/ «чăваш» тенĕ, «черемис» /çармăс/ сăмах «харсăр çар çынни» е «вăрман çынни» каласан, 16 ĕмĕр пуçламăшĕччен кунти тăрăха халиччен питĕ лайăх пĕлнĕ анăç, тухăç, грек, араб, вырăс çыравçисем те çак халăх çинчен «чăваш» ятпа пĕр сăмах та çырса хăварман.

Вырăс летопиçĕсемпе акчĕсенче 16 ĕмĕр пуçламăшĕнче чи патшалăх ĕçĕнчи /службинчи/ тутар çĕрĕсем çинчен çырнă чухне «служивый татарин и его чюваши» тесе асăннă. Ахăртнех, çакă çырса çӳрекенĕсем «чюваш» терминпа халăх ятне мар, халăхăн çав тапхăрти социаллă сийне çеç палăртнă. «Чюваш» тени этноним пулманнине çак та çирĕплетнĕн туйăнать: кĕнекере «хырçă чювашĕсен» ялĕсен масар-çăвисене тутарсен масарĕ тесе çырса хăварнă.

15–17 ĕмĕр пуçламăшĕнчи вырăс тата хĕвеланăç Европа тĕпчевçисем, çыравçисем Вăтам Атăл тăрăхĕнче вăл тапхăрта пурăнакансене ытларах чух «тури черемиссем» тесе палăртнă. В.К. Магницкий Пĕрремĕш Петĕр патшачченхи архив документчĕсене тĕпчесе çакна çирĕплетнĕ: патшалăх акчĕсемпе грамотисенче Чăваш тăрăхĕнчи халăха «черемис» е «татар» тесе палăртнă, вырăссемшĕн ют йăхсене чăн ячĕпе палăртас йĕрке пулманни, мĕнле ятпа асăнас тенĕ, çавăн пек асăнни çинчен çырать.

19 ĕмĕрĕн çурринчи паллă историк-этнограф С.М.Михайлов та çавнах çырать. Унăн шучĕпе пирĕн халăха ун чухне, ахăртнех, «орда», «тутар» пĕтĕмле ятсемпе асăннă. Хăй шухăшне ĕнентерме вăл 1689 çулта чăвашсене вăл вăхăтра Вырăс патшалăхĕн пуçĕнче пĕрле тăнă Иоанпа Петр Алексеевичсем тата София Алексеевна çĕр уйăрса пани çинчен калакан Грамотăна илсе кăтартать. Унта чăвашсене «тури тутарсем» тенĕ, çавăнпа «чăваш» ят паллă пулман тесе çырать С.М. Михайлов: «...Вследствие сего должно убедиться, что чуваши действительно скрывались у летописцев русских под именем татар, с которыми они поживали несколько веков в Казанском царстве», – тет вăл.

Манăн шутпа, «чăваш» сăмах этноним мар. Революциччченхи историксемпе тĕпчевçĕсен ĕçĕсене тишкерсе эпĕ çапларах пĕтĕмлетӳ турăм, сăварпăлхар этносĕ 18 ĕмĕр пуçламăшĕччен хăйсене «чăваш» ят хунине чухламан та.

Араб авторĕсемпе маларахри летопиççенче чăвашсене, тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх, «сăвар» этнонимпа палăртнă. Манăн ачалăхри аса илӳсенче те асаттесемпе асаннесем ир тăрсан Турра мухтаса «савир» /сав, ир/ тени, çĕр ĕçĕпе ĕçлессине вара «супар» /суп – ывăн, халтан кайса ĕçле – «ĕçпе супрăм»/ тетчĕç. Е тата: «Сапăр пул» – çырлахуллă, кăмăллă пул. Ахăртнех, çакнашкал каларăшсем авалхи Субарту патшалăхĕ вăхăтĕнченех /пирĕн эрăччен 3 пин ĕмĕр каялла/ упранса юлнă. Субарту питĕ çирĕп патшалăх пулнине палăртаççĕ вăтам ĕмĕр авторĕсем те, архиологи материалĕсем те. Цивилизаци пысăк шайра пулнăран халăхĕ хăйĕн пурнăçĕпе те, патшисемпе те кăмăллă пулнă пулмалла, пĕр-пĕрне «Пĕрлех пулар, сапирсем» тенĕ. «Савир», «субар», «сабир» – «сувар» сăмахăн маларахри хурмисем.

*/Малалли пулать./*



В день 165-летия великого чувашского просветителя И.Я. Яковлева делегация, в составе которой были представители полпредства Чувашии при Президенте РФ во главе с Л.В. Волковым, Чувашской национально-культурной автономии, товарищества офицеров «Сыны Отечества», родственники Ивана Яковлевича, побывали на могиле патриарха в г. Москва *(на фото)*.

✓ ПУЛАТЬ ВĔТ

### Америкăран тарса суда çитнĕ

**Америка çемйине усрава илнĕ Александр Абносов тăван тăрăхне – Шупашкара – тарса килни пирки массăллă информаци хатĕрĕсем хăй вăхăтĕнче вăйлă шавларĕç.**

Каччă пирки усал çынсен кăра аллине лекнĕ евĕр йышăнакансем малтанласа ытларах пулчĕç. Каярах Шупашкара таврăнсан Саша урам енне туртăнни пирки те хыпар-хăнар тухрĕ.

Те ашшĕ-амăшĕн юратăвĕ çуккипе, те тата урăх сăлтава пула çавăн пек тыткаларĕ-ши вăл хăйне – калама хĕн. Анчах каччă пĕррехинче Шупашкарти пысăк лавккасенчен пĕринче вăрă ĕçĕпе çакланни паллă. Ытлашши темех туса хуман-ха вăл – виçĕ савăт кофе вăрлама хăтланнă. Теприсем миххи-миххипе йăкăртаççĕ пуль тенипе çавăн пек хăтланкаларăша тӳрре кăлараймăн çав – саккун умĕнче пурте тан. Нумаях пулмасть Александр тĕлĕшпе суд пулнă. Ăна 200 сехетлĕхе ĕçлеттерсе юсамалла тунă.

### Пуканесем тĕрмерисене ырра вĕрентесшĕн

**Чăваш патшалăх пукане театрĕ Хĕрарăмсен республикăри канашĕпе тата Чăваш Енĕн епархийĕпе пĕрле юсанмалли колонисенче пĕрлехи мероприятисем ирттерме шут тытнă. Вĕсем тĕрмере ларакан хĕрарăмсене театр ӳнерĕ урлă ырра вĕрентесшĕн.**

Э.–Э. Шмитт пьесипе лартнă «Турă патне çырнă 14 çыру» спектакле артистсем иртнĕ уйăхра Çĕрпӳ районĕнче вырнаçнă хĕрарăмсен колонийĕнче кăтартнă. 10 çулхи вилесле чирлĕ арçын ачан хурлăхлă шăпине сăнарлани читлĕх леш енчисен чунне пырса тивессе шанса театр Куславккари колонире те пулнă. Унта, сăмах май, артистсемшĕн те тĕлĕнмелли тупăннă. Айăплав вăхăтне колонире ирттерекен хĕрарăм хатĕрленĕ «Чун йĕрет» видеофильм Пĕтĕм Раççей шайĕнче йĕркеленĕ «Ыррин пулмаллах» IV кинофестивальте пĕрремĕш вырăна тухнă. Çĕнтерӳçĕне 7 пин тенкĕ премипе чысланă. «Кĕмĕле» хĕрарăм чирлĕ ачана пулăшма уйăрма палăртать-мĕн.

Çывăх вăхăтра артистсем Улатăрти колоние çитесшĕн.

### Хĕрхеннипе каçарас тенĕ, анчах Президент килĕшмен

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ çумĕнчи каçару комиссийĕ иртнĕ çул тĕрмере ларакан çынна каçарма йышăннă. Анчах Раççей Президенчĕ хĕрхенме килĕшмен. Çапла пĕлтерет республикăн Юстици министерстви асăннă комиссин пĕлтĕрхи ĕçне пĕтĕмлетнĕ май.**

Аса илтеретпĕр, каçару комиссине 2002 çулта туса хума йышăннă. Унăн йышĕнче – 14 çын. Çавсен хушшинче канăва тухнă тӳресем те, общество организацийĕн элчисем те, çыравçă та, чиркӳ çынни те пур.

Комисси ларăва уйăхсерен пуçтарăнать. Пĕлтĕр, сăмахран, тĕрмере ларакансен хăйсене шеллеме ыйтнă 132 çырăвне пăхса тухнă. Çакна та палăртмалла – республика шайĕнче тунă йышăнăва çĕршыв Президенчĕ тишкерсе татăклă сăмах калать.

### Нимелле çул сарнă

**Тарçа шанакан хăрах куççăр,ачапăчана шанакан сĕм куççăр юлнă теççĕ ваттисем. Сĕнтĕрвăрри хулинчи Чернышевский тата Шкул урамĕсенче пурăнакансем те такам пулăшасса кĕтсе лариччен ĕçе хăйсем тытса тума шут тытнă.**

Çакăн пек шухăшпа çунатланса вĕсем çу уйăхĕн пĕр кунĕнче хăйсем пурăнакан шăтăк-путăклă урамсене йĕркене кĕртнĕ. Хастарсенчен пĕри ӳркенмесĕрех шлак тиесе килнĕ, халăх вара ĕçе кӳлĕннĕ – тимĕр шăратнă хыççăн юлакан çав материала сарса тухнă. Хула администрацийĕ хыпарланă тăрăх, ĕçе ватти-вĕтти тухнă. Пĕр тытăннă-тытăннах вĕсем тăван тăрăха та хăтлăх кĕртнĕ – таврари çӳп-çапа пуçтарнă.

**Вера ЭВЕРККИ.**